**«Чĕвĕлти чĕкеç – 2024»**
**конкурс ыйтăвĕсем**
**2 – 3 классем валли**

## 3 балл

1. Çăмран çыхнă е ăшă тытакан ытти материалтан çĕленĕ алла тăхăнмалли хатĕре мĕн теççĕ?
(А) çăм атă; (Б) чăлха; (В) кĕрĕк; (Г) сулă; (Д) алсиш.
2. *Вĕренни – çутă, вĕренменни –* ... ваттисен сăмахне вĕçлĕр.
(А) тĕттĕм; (Б) япăх; (В) тĕксĕм; (Г) хура; (Д) ухмах.
3. *Ансат* сăмах хăш сăмахпа пĕр пĕлтерĕшлĕ?
(А) ансăр; (Б) сарлака; (В) йывăр; (Г) кăткăс; (Д) çăмăл.
4. Айван çын çинчен мĕнле калаççĕ?
(А) пиçмен çăкăр;
(Б) пиçмен кукăль;
(В) пиçмен пашалу;
(Г) пиçмен нимĕр;
(Д) пиçмен пăтă.
5. *Голубика* чăвашла мĕнле пулать?
(А) хĕрлĕ çырла;
(Б) кăвак çырла;
(В) хура çырла;
(Г) хăмăр çырла;
(Д) ула çырла.
6. Чăваш алфавитĕнчи вăтăр çиччĕмĕш сас палли хăшĕ пулать?
(А) щ; (Б) э; (В) ы; (Г) ю; (Д) я.
7. Пусăма (ударение) хăш сăмахра тĕрĕс лартман?
(А) акă´ш; (Б) ка´йăк; (В) кăвака´рчăн; (Г) ка´рăк; (Д) кă´йкăр.
8. *Локоть* сăмаха чăвашла куçарăр.
(А) чышкă; (Б) миме; (В) алă; (Г) шăнăр; (Д) чавса.
9. *... чĕлхи – чĕкеç чĕлхи* ваттисен сăмахĕнче нумай пăнчă вырăнне кирлĕ сăмах лартăр.
(А) тутар; (Б) вырăс; (В) çармăс; (Г) чăваш; (Д) акăлчан.
10. Тупмалли юмахăн тупсăмне пĕлĕр.

*Пĕр кĕпе те унăн çук*
*Пĕчĕк чух.*
*Ватлăх кунĕ çитеспе*
*Çĕр кĕпе.*

(А) сухан; (Б) ыхра; (В) купăста; (Г) пăрçа; (Д) çарăк.

## 4 балл

11. Ытти тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулакан *ана* сăмах чăвашла мĕнле пулать-ши?
(А) анне; (Б) атте; (В) парне; (Г) катăркас; (Д) чĕре.
12. Метаграмма тупсăмне пĕлĕр.

*Яланах манпа килеççĕ*
*Пулăçсем пулла кайсан.*
*Шывăма савса ĕçеççĕ*
*Сас палли улăштарсан.*

(А) пулă – пусă; (Г) çăрттан – çăл;
(Б) пулă – çăл; (Д) вăлта – кран.
(В) пулă – витре;

13. Миçе *пӳ* илсен Чăваш Республикинчи хула ячĕ пулать?
(А) 1; (Б) 10; (В) 100; (Г) 1000; (Д) 10000.

14. Çырулăхри мĕнпур сас паллисене тата вĕсен йĕркине мĕн теççĕ?
(А) азбука; (Б) букварь; (В) фонетика; (Г) алфавит; (Д) словарь.

15. *Вăрăм инке шыва каять* тупмалли юмахăн тупсăмне пĕлĕр.
(А) кинемей; (Б) тăрна; (В) лаша; (Г) хур; (Д) кран.

16. Ваттисем сăнанă тăрăх, кушак урисемпе мĕне те пулин чавкалани мĕне пĕлтерет?
(А) çумăр çăвасса; (Г) сивĕтессе;
(Б) тăман тухасса; (Д) ниме те пĕлтермест.
(В) ăшăтасса;

17. Вырăссен *зарубить на носу* фразеологизмĕ вырăнне чăвашсем мĕнле калаççĕ?
(А) сăмсу çине картса хур; (Г) пуçу çине çырса хур;
(Б) сăмсу çине çырса хур; (Д) сăмсу çине касса хур.
(В) çамку çине картса хур;

18. ... *шыв юхать* предложенире нумай пăнчă вырăнне кирлĕ сăмах лартăр.
(А) чăштăр-чăштăр; (Г) кăптăр-кăптăр;
(Б) вăштăр-вăштăр; (Д) çăтăр-çăтăр.
(В) шăнкăр-шăнкăр;

19. Хăш сăмахсенче *ь* лартмалла?
(А) çивĕт.., сивĕт..; (Г) вĕтет.., сӳпĕлтет..;
(Б) ӳкет.., камит..; (Д) ташлат.., юрлат...
(В) хĕвел.., кил..;

20. *Пирĕн çемьере ... виçĕ ача* предложенире нумай пăнчă вырăнне хăш сăмахне çырмалла?
(А) çемйере; (Б) çемйинче; (В) çемере; (Г) çемьере; (Д) семьяра.

## 5 балл

21. *Лутра майра – пичке ăсти* тупмалли юмахăн тупсăмне пĕлĕр.
(А) ăтăр; (Б) тырă; (В) улмуççи; (Г) *чăх*; (Д) пĕремĕк.

22. *Я играю на гитаре* предложение чăвашла куçарăр.
(А) Эпĕ гитарăпа вылятăп. (Г) Эпĕ гитара çинче калатăп.
(Б) Эпĕ гитара çинче вылятăп. (Д) Эпĕ вылятăп çинче гитара.
(В) Эпĕ гитара калатăп.

23. Сăвă йĕркисен авторĕ кам?
*Пуш уйăхĕн вĕçĕнче* *Силпи чăваш ялĕнче*
*Хĕвел пăхрĕ ăшăтса.* *Юр ирĕлчĕ васкаса.*
(А) К. Иванов; (Б) П.Хусанкай; (В) Çеçпĕл Мишши; (Г) А. Галкин; (Д) Г. Луч.

24. Чылай чăваш юмахĕ мĕнле предложенипе пуçланать?
(А) Пурăннă тет карчăкпа старик.
(Б) Пурăннă тет старик тата карчăк.
(В) Пурăннă тет старикпа карчăк.
(Г) Пурăннă тет карчăк тата старик.
(Д) Пурăнаççĕ тет старикпа карчăк.

25. *Ача, лайăх, куккук, ĕне, пĕрре, вĕренет, кĕнеке, ĕмĕт, кулать, илемлĕ* сăмахсем хушшинче япалана пĕлтерекеннисем миçе?
(А) 1; (Б) 2; (В) 3; (Г) 4; (Д) 5.

26. Хистевлĕ предложени тупăр.
(А) Паян эпир уроксем хыççăн вулавăша каятпăр.
(Б) Паян эсир уроксем хыççăн вулавăша каятăр.
(В) Паян эпир уроксем хыççăн вулавăша каясшăн.
(Г) Паян эсир уроксем хыççăн вулавăша кайăр.
(Д) Паян эпир уроксем хыççăн вулавăша кайма шутларăмăр.

27. ... – *кулянчăк, ...* – *мухтанчăк* ваттисен сăмахĕнче нумай пăнчă вырăнне кирлĕ сăмахсем лартăр.
(А) ĕне, вăкăр; (Г) хур, кăвакал;
(Б) куян, мулкач; (Д) мулкач, тилĕ.
(В) чăх, автан;

28. Хăшĕ ытлашши?
(А) тăрлавсăр; (Б) пуçтаруллă; (В) тĕплĕ; (Г) тирпейлĕ; (Д) перекетлĕ.

29. Авалхи чăваш хĕрарăмĕн туйра тăхăнмалли сăхманне мĕн теççĕ?
(А) сăрка; (Б) пӳштĕр; (В) çипиркке; (Г) çеçтенкĕ; (Д) хыс.

30. Ребусра Çĕнĕ çул çинчен мĕнле сăмахсене вулама пулать?
(А) Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатпăр.
(Б) Çĕнĕ çула пиллĕк паллăпа кĕтсе илер.
(В) Çĕнĕ çула мĕнле кĕтсе илетĕн, çавăн пек пулать.
(Г) Çĕнĕ çул çĕнĕ ăнăçу илсе килтĕр.
(Д) Çĕн çулта çĕн пултарулăх пултăр.

